Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | N 83 (4652) | *1998 çулхи июль (утă) уйăхĕн 24-мĕшĕ, эрнекун* | *Палăртнă хакпа.*

## Тутарстан, Нурлатăн тыррине йышăн!



**Юнкун Нурлатри элеватора çĕнĕ тухăç тиенĕ пĕрремĕш машинăсем килчĕç. Çĕнĕ тухăçа пĕрремĕшĕсем пулса кооперативсен Мичурин ячĕпе хисепленекен пĕрлешĕвĕнчен, хресченсен хуçалăхĕсен "Татарстан", "Кондурча", "Рассвет" тата Хафизов ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕсенчен илсе килчĕç. Пĕрремĕш икĕ хуçалăх тырă йышăнакан пункта кĕрхи тулă, ыттисем ыраш ăсатнă.**

**Республикăра пĕрремĕшĕсем пулса тырпул пухса кĕртме тухнă çĕр ĕçченĕсене чăтăмлăх тата ăнăçлăх сунатпăр.**

***Сакă тата ытти пысăк пĕлтерĕшлĕ событисем çинчен хаçатăн çитес номерĕнче тĕплĕнрех çырса пĕлтерĕпĕр.***

## Учитель те, комбайнер та



Ӳкерчĕкре: "Кейс" комбайнерĕ Ф.Г.Гаязов.

***Фанис Талипович специальноçпе учитель. Аслă пĕлӳ туяннă хыççăн Бикулово каччи нумай вăхăт хушши Хумаелĕнчи вăтам шкулта вăй хунă. Ачасене ĕçе хăнăхтарнă, çĕр ĕçĕнче чи кирлĕ техникăпа - тракторпа çӳреме вĕрентнĕ. Суйласа илнĕ ĕçе парăннипе, анлă тавракурăмлă пулнипе ăна ун чухнех ачасем юратнă тата хисепленĕ. Хальхи вăхăтра унăн воспитанникĕсем тăван хуçалăх хирĕсенче тăрăшаççĕ. Каярах вара Ф.Т.Гаязов 99-мĕш СПТУра çак ĕçе малалла тăснă. Анчах та хулана куçсан та вăл çĕр ĕçне пурнăçламасăр пултарайман: çу пуçлансанах хăйĕн профессине улăштарать: МТСăн пĕрлештернĕ отрячĕн составĕнче тырçине активлă хутшăнать. Пĕлтĕр района "Кейссем" илсе килсен пуян опыт пухнă Фанис Талипович çĕнĕ техникăпа вăй хума пуçланă. Кăçалхи вырман пĕрремĕш кунне вăл кооперативсен Мичурин ячĕпе хисепленекен пĕрлешĕвĕнчен пуçланă, шăпах унта, кĕрхи ыраш хирĕнче ăна пирĕн фотокорреспондент çапса илнĕ.***

Самоуправленин районти Советĕнче

## ЙĔРКЕЛĔХ ЙĔРКЕЛӲÇĔСЕНЧЕН ПУÇЛАНАТЬ

Çуллахи вăхăтра уйрăм çынсен выльăхĕсене хирсене таптаттарас мар ыйту çивĕч тăрать. Ку кăçал та улшăнман, çавăнпа та администраци пуçлăхĕ ирттерекен канашлусенче ертӳçĕсене акнă анасем çине выльăхсене кĕртмелле марри çинчен яланах асăрхаттарма тӳр килет. Ку ыйтăва Нурлат районĕн тата вырăнти самоуправленин ял Совечĕсен ертӳçисем хутшăннипе иртнĕ канашлура çĕклерĕç, выльăхсем хирсене таптанă конкретлă фактсене тĕрĕсленĕ. Çапла, канашлура тухса каласнă район Совечĕн председателĕн çумĕ А.Н.Ельченков хирсене таптассине сыхламан Советсене асăнчĕ, вĕсем хушшинче Пӳлеркӳл, Якуркел, Элмет, Кăчăканлă, Амзя тата ыттисем, малашне те çакăн пек тĕслĕхсем пулсан явăплисем тĕлĕшпе мерăсем йышăнасси çинчен аса илтерчĕ. Канашлура çаплах кашни ĕçе тимлĕх уйăрмалли, Советсем хăйсен территорийĕсене таса тытас тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлеменни çинчен каларĕç.

Ял çыннисен çурчĕсене çутçанталăк газĕ кĕртес ыйтăва хăвăртлатас задача пĕрремĕш плана тăратрĕç.

Ял урамĕсемпе çӳрессин хăрушсăрлăх ыйтăвĕ те питĕ çивĕч тăрать. Çулпа çӳрессин хăрушсăрлăхĕн госинспекторĕ Х.Аюпов каланă тăрăх, ялсен урамĕсемпе водительсенчен нумайăшĕ транспорта ӳсĕрле çӳретеççĕ, çулсем çинче кашни кун 2-3 инкек пулнине регистрацилеççĕ, çавăн пек инкексенче çынсем вилнĕ тĕслĕхсем те пулаççĕ. Çаплах вăл уйрăм транспорта регистрацилес ыйту çинче чарăнса тăчĕ, ял Совечĕсен председателĕсене вĕсен списокне тума хушрĕ.

## Ертӳçĕ улшăннă

Июлĕн 20-мĕшĕнче хресченсен хуçалăхĕсен "Черемшан" ассоциацийĕн членĕсен пĕрлехи пухăвĕ пулса иртнĕ. Пуху Х.Ш.Шамсуаровăн заявленине тĕпе хурса, сывлăхĕ япăх пулнине шута илсе, ăна хуçалăх председателĕн тивĕçĕсенчен хăтарнă. "Черемшан" ассоциаци председателĕ пулма Раис Тагирович Гатауллина суйланă.

Пухăва район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн начальникĕ Ф.М.Давлетшин тата администраци аппаратĕн ертӳçи Ф.Р.Ногуманова хутшăннă.

## Ăшшăн саламлатпăр!

ТР Президенчĕн Указĕпе "Татмелиорация" Трастовая компани" уçă акционер обществин мелиорацие шыв хуçалăхĕн строительствин дирекцийĕн пуçлăхне **Юрий Васильевич АНИСИМОВА** "Тутарстан Республикин тава тивĕçлĕ мелиораторĕ" хисеплĕ ят панă.

* Яла - газ

## Кукăркӳлĕнче пур, Гайтанта та пулĕ

Иртнĕ эрнере "Черемшан" хуçалăхри Кукăркӳлĕнчи пĕрремĕш вунă çуртра та çутçанталăк газĕ çунма тытăннă. "Востокмонтажгазăн" 2-мĕш СМУ пурĕ уйăх çурăра урамсенче газ пăрăхĕсене хывас, çуртсемпе çыхăнтарас кăткăс ĕçсене лайăх пахалăхпа пурнăçланă. Тăрăшни ахаль пулман - пĕрремĕш вунă çуртра сетьри газ çунать, хăш-пĕр çитменлĕхсене пĕтерсен тата вăтăр çурта ытла çутçанталăк газĕ кĕртĕç. Ку енĕпе Гайтан ялĕнче пурăнакансемшĕн те савăнмалли кун часах çитĕ.

## Проспект çĕнелет

Хулан çурçĕр пайĕнче вырнаçнă Карл Маркс проспекчĕ тинех лайăх енне улшăнма тытăнчĕ. Юлашки кунсенче кунта çуртсем патне кĕрекен çулсене, картишсемпе площадкăсене асфальт сарнă. Çак ĕçсене МПП заявкине тĕпе хурса, "Татнефтедор" акционер обществин автомобиль çулĕсем тăвакан Нурлатри управлени пурнăçланă, М.М.Валиев прораб ертсе пынипе çул-йĕр тăвакансем кĕске вăхăт хушшинче 1200 тăваткал метр лаптăк çине асфальт сарнă.

## Чи лайăххисем çĕнтереççĕ

Юлашки вăхăтра финанспа экономика условийĕсем япăхланни нефтяниксене професси ăсталăхĕн йăлана кĕнĕ конкурсĕсене ирттерме кансĕрлемен. Условисем тата çĕнтерӳçĕсем çинчен пире нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управленин ĕç тата ĕçшĕн тӳлекен пай начальникĕ В.М.Петрова каласа пачĕ. Положение тĕпе хурса, комисси йĕркеленĕ, I-II вырăнсене йышăннă конкурсантсемшĕн укçан премисем пама пăхса хăварнă.

Конкурс июлĕн 15-мĕшĕнче пуçланнă. Скважинăсене çĕр айĕнче тата капиталла юсакан бригадăсем, нефть объекчĕсене хатĕрлекен слесарьсемпе электромонтерсен, газоэлектромонтерсен, газоэлектросварщиксен звенисемпе бригадисем хушшинче сарăлнă ăмăрту професcипе чи лайăххисене палăртрĕ. Çапла, скважинăсене çĕр айĕнче юсакан бригадăсем хушшинче Р.Ф.Хаджимуратовăн (I вырăн) тата И.В.Зайцевăн (II вырăн) бригадисем çĕнтернĕ. Скважинăсене капиталла юсакан бригадăсен конкурсĕнче Р.А.Зартдиновăн яшĕсемпе танлашакансем пулман. Иккĕмĕш вырăнта Е.А.Кротов мастерăн бригади. Слесарьсем хушшинче Р.Р.Абзипаров мала тухнă, иккĕмĕш вырăна Г.П.Андреев йышăннă.

Ытти профессисен представителĕсем хушшинче пĕлтерне конкурссем малалла пыраççĕ. Часах цехсен смотр-конкурсĕ иртĕ. Хак панă чухне çак критерисене тĕпе хурĕç: чи малтан производство кăтартăвĕсене шута илĕç, унтан цехсен шайне, компетентлă комисси çаплах производство культурине, ĕç сыхлавне, хăрушсăрлăх техникине тимлĕх уйăрĕ.

**Ф.ГАЛИМОВА.**

КУН хыççăн КУН

## Çăмăл мар ăмăрту

"Татмебель" пĕрлештернĕ патшалăх предприятийĕнче 10 комплектран тăракан "Валентина" çĕнĕ çывăрмалли пӳлĕм наборĕ хатĕрлеме пуçланă. Çĕнĕ наборпа хальхи хваттерсен çывăрмалли пӳлĕмĕсене илемлетме палăртнă. Набор кравать хыçĕсене, тĕкĕре тата туалет тумбисене, шкаф алăкĕсене декоративлă илемлетнипе уйрăлса тăрать.

"Татмебель" ахальтен мар чикĕ енчинчен пĕртте кая мар сĕтел-пукан кăларма пуçланă. Ĕçĕ акă мĕнре: Тутарстанра ют çĕршывран кӳрсе килнĕ питĕ хаклă тăракан сĕтел-пукан йышланнă. "Татмебель" вара, паянхи куна çывăрмалли пӳлĕм валли ют çĕршывран кӳрсе килнисенчен кая мар "Валентина" сĕтел-пукан наборĕ туса кăларса пирвайхи утăм турĕ. Чи кирли вара - чылай йӳнĕрех тăрать.

Кăçалхи пĕрремĕш кварталта пĕр тонна нефть кăларма тухакан тăкаксем 145,1 тенкĕ шутланнă, "Татнефть" акционер обществин нефтьпе газ кăларакан хăш-пĕр управленийĕнче çак кăтарту 60-70 тенкĕ ытларах.

Май уйăхĕн юлашки кунĕсенчен пĕринче, Альметьевск хулинче иртнĕ экономика канашлăвĕнче нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть"управленин пĕр скважина пуçне чи пысăк удельнăй тупăш пулнине, "Татнефть" акционер обществинче вара пĕр тонна нефть кăларма чи сахал тăкак тунине палăртрĕç.

- Темиçе çул каярах коллектив кашни цех, кашни уйрăм хăйĕн умне производствăри шалти резервсемпе май пур таран ытларах усă курас задача лартнă, - тет "Нурлатнефть" начальникĕ М.М.Хузин. - Çавăнпа ку йăлана кĕчĕ. Эпир çулсерен кирлĕ мероприятисем ĕçлесе хатĕрлетпĕр, яваплă çынсене палăртатпăр. Пĕрлехи тĕллеве кашни ăнланса пурнăçлать. Çакăн результачĕ вара куç умĕнчех. Калани çумне çакна та хушса хумалла, НГДУра нефть кăларасси 1997 çулчен ялан ÿсрĕ, хальхи вăхăтра çирĕпленчĕ.

1997-1998 çулсенче предприяти хăйĕн вăйĕпе нефть уçламалли системăна реконструкцилес тĕлĕшпе пысăк ĕç пурнăçланă. 42,5 километр тăршшĕ нефть пăрăхне улăштарнипе, тĕпрен юсанипе, 67,2 километр шыв пăрăхĕсене металл - пластмасса пăрăхсемпе улăштарнипе, 34 километр промысла çулне тĕпрен юсанипе тăкаксем ÿснĕ.

## ШАЛТИ РЕЗЕРВСЕНЕ ШЫРАСА

# Шанăç тÿрре тухсан

***Нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управлени йĕркеленнĕренпе вунсакăр çул çурă хушшинче кунта çирĕп практика йăлана кĕнĕ, унăн тĕп тĕллевĕ - продукци туса илессин тăкакĕсене чакарасси. Ĕçре вара шалти резервсене шырасси тата вĕсемпе производствăра усă курасси тĕп вырăн йышăнать.***

***Юлашки çулсенче тунă результатсем коллектив шалти резервсене шанни пĕтĕмпех тÿрре тухать.***

Унсăр пуçне, НГДУ Кувак водозаборĕнчен инçетре вырнаçни те ĕçре япăх енчен палăрать.

НГДУ материалсемпе, оборудованипе тата çуламалли-сĕрмелли материалсемпе тивĕçтерекен тĕп базăсенчен инçетре вырнаçнипе, нефть кăларакан вырăнсем тĕрлĕ çĕрте пулнипе те тăкаксем чылай тухаççĕ.

"Нурлатнефтьре" шалти резервсене шырас тата вĕсемпе усă курас ĕçе вуникĕ тĕп çул-йĕрпе илсе пыраççĕ.

Çак çул-йĕрсемпе пуринпе те чылай ăнăçлăхсем тунă. Сăмахран, 1996 çулта технологипе транспорт управленийĕнче 21 агрегатпа 21 автоцистерна водителĕсене ĕçленĕ тăрăх тÿлессине кĕртнĕ. 1997 çулхи пĕрремĕш кварталта тата 40 агрегатăн, 13 цистернăн водителĕсене çавăн пек тÿлеме тытăннă, виççĕмĕш кварталта мĕнпур ППУ машинисчĕсене, хăш-пĕр трактористсемпе бульдозеристсене, автокрановщиксене те ĕçшĕн çĕнĕ системăпа тÿлеме тытăннă.

Çакăн пек системăпа тÿлесси çине куçни ĕçе йĕркелессинче хăш-пĕр çитменлĕхсене палăртма май пачĕ. Çапла, 1997 çулхи 4 уйăхра (февраль-май) агрегатсем шыв илсе килессе кĕтсе 120 сехет пушă ларнă, водовозсем вара ытти объектсенче агрегатсем кĕтсе 73 сехет ĕссĕр ларнă. Сăлтавĕ - УТТран комплектламан экипажсем тухни. Çулталăк хушшинче çакăн пек çитменлĕхе пĕтĕмпех пĕтернĕ.

Тата. Ĕç вăхăтне çухатассине чакарнипе, ĕçе йĕркелессине лайăхлатнипе ятарлă транспорт пурнăçланă ĕçсен шучĕ ÿснĕ. Çапла, 1997 çулхи пĕрремĕш кварталта пĕр агрегат вăтамран 24,1 операци пурнăçланă, кăçал çак тапхăрта - 26,5 операци. Çак системăпа ĕçлени кăçалхи пĕрремĕш кварталта çеç 399,6 пин тенкĕ перекетлеме май панă.

Операци системине ĕçе кĕртсе, тĕрĕслев çинчен те манман, нарядсене тĕплĕн тĕрĕсленĕ. Иккĕленÿллĕ путевкăсем пулсан мастерсем ăнлантарусем çырнă. Çакăн пек чăкăлтăшлă ĕç хушса çырассине пĕтернĕ. Автомашинăсене çÿретессин километрĕ, çав вăхăтрах пĕр техника пуçне çуламалли-сĕрмелли материалсем тăкакласси те агрегатсем тĕлĕшпе кварталта вăтамран 30 метр, автоцистернăсемпе 200 метр чакнă.

Çĕр айĕнчи скважинăсене юсакан цех начальникĕ Н.Г.Шафиков каланă тăрăх, 2-3 çул каярах цехсене кунне 12 водовоз тухнă пулсан, халь вара 8-9 тухаççĕ.

Çĕр айĕнчи скважинăсене юсакан цех çинчен сăмах хускатрăмăр пулсан, иртнĕ çул управленире скважинăсене лайăх, тĕпрен юсанăшăн премi парассипе усă курни çинчен те каласа хăвармалла (НГДУ начальникĕ М.М.Хузин хушнипе). Ку документпа геологсем те, экономистсем те, промысловиксем те усă кураççĕ, юсав цехĕнче ĕçлекенсем çинчен каламалли те çук ĕнтĕ.

СМЦăн строительствăпа монтаж звенисене ĕçшĕн аккордлă системăпа, ПРЦЭО станочникĕсене ĕçленĕ тăрăх тÿлесси çине куçни те усăллă пулчĕ.

"Нурлатнефть" энерготăкаксене чакарас тĕлĕшпе тахçанах ĕçлет. Тÿрех калатпăр, электроэнергие тăкаклани 6,9 шутланать, ку вăл чи пĕчĕк шай.

1992 çулта пĕчĕк дебитлă скважинăсенче хуллен çÿрекен двигательсемпе усă курма тытăннă. Çавăнтанпа станок-качалкăсене хуллен çÿрекен 185 двигатель вырнаçтарнă. Малашне вĕсене çулталăкне 15-шер штук кĕртме шутланаççĕ.

Нурлатри нефтепромысловиксем "Татнефть" акционер обществин Тутарстанри нефть промыслисенче энергие перекетлекен технологие алла илсе пурнăçа кĕртмелли стратегиллĕ программине пĕрремĕшĕсем пулса ырланă. Кунта энергипе тивĕçтерессинче автоматла системăн комплексне ĕçе кĕртме тытăннă. Çаксем пурте наука тĕпе хурса "ТатНИПИ нефть" институчĕн, радио çыхăнăвĕн (Шупашкар хули) Пĕтĕм Раççейри наукăпа тĕпчев институчĕн ученăйĕсем тата Беларуçри специалистсем "Спецнефтеэлектроремстройăн" юсав управленийĕн ĕçченĕсемпе пĕрле станок-качалкăсен ĕçне автоматизацилемелли технологие алла илес тĕлĕшпе пысăк калăпăшлă ĕç пурнăçланă.

Нефть кăларассинче автоматизацилемелли системăна ĕçе кĕртнин результачĕ мĕнле? Питĕ лайăх тата усăллă.

Предприятири экономикăна çирĕплетес тĕлĕшпе мĕнпур ĕçе тĕплĕн тишкерсе тухса, "Нурлатнефть" ертÿçисем "Татнефть" акционер обществине тăкаксене кĕске вăхăтра чакарма сĕнÿсем панă. Вĕсене пурне те тенĕ пекех ырланă.

Паллах, кунта калани "Нурлатнефтьре" мĕнпур ыйтусене ăнăçлă татса панине пĕлтермест ĕнтĕ. Мĕн çинчен шухăшламалли, ĕçлемелли пур-ха. Промысловиксемпе скважинăсене юсакансен, геологсемпе строителĕсен тата энергетиксемпе механиксен, экономистсен тăрăшарах вăй хумалла. Мĕнпур рангсенчи службăсемпе специалистсем валли ĕç çителĕклĕ. Тĕп ыйтусенчен пĕри вăл - сутакан продукци хăйхаклăхне чакарасси.

НГДУ коллективĕнче çакна лайăх ăнланаççĕ, палăртнă тĕллеве пурнăçлас тесе вăйĕсене шеллемесĕр тăрăшаççĕ тата малашлăха шанаççĕ.

**В.БУРАЙКИН.**

***Рахима кÿршĕ Çарăмсан районĕнче çуралса ÿснĕ. Анчах та пирĕн район ăна çывăхрах. Унăн пурнăçĕ шăпах Нурлатпа нумай çыхăннă, вăл кунта çĕнĕ туссем, хăйĕн телейне тупнă. Çамрăк чухне вăл сахăр заводĕнче ĕçлеме пуçланă. 1975 çулта вара Октябрь райповĕн ял хуçалăх магазинне куçнă. Çак вăхăтран унăн суту-илÿ системинчи биографийĕ пуçланать.***

***Ĕçре тĕрли пулнă, анчах та вăл ялан хăйне тыткалама пĕлнĕ. Тавар туянакансем пурне те туяççĕ, вĕсенчен лайăххине те, начаррине те пытараймастăн. Сутуçă кăмăлĕнчен нумай килет. Çавăнпа та Рахима Тагировна магазинта ырă кăмăллă хуçа пулма тăрăшать, пурнăç çинчен ыйтса пĕлет, хуйхă пулсан лăплантарать.***

***Çын вăйлă пулмалла тесе шутлать вăл. Çак вăя ăна Турă парса тăрать пулĕ.***

***Рахима Тагировна АТП çывăхĕнче юлташĕпе ĕçлекен пысăках мар магазин çур çулхи кăтартусемпе ытти суту-илÿ точкисенчен чылай малта тăрать.***



***Ÿкерчĕкре: 13-мĕш номерлĕ магазин сутуçи Р.Зайдуллина.***

***Н. Азизов сăнÿкерчĕкĕ.***

# Таварсем çинчен икĕ чĕлхепе пĕлтерн[illegible]

Нумаях пулмасть ТР министрсен Кабинечĕ "Таварсем сутнă чухне потребительсене информаци тăратмалли йĕркепе меслетсем çинчен Положение çирĕплетесси çинчен" Постановлени йышăннă, унта кăçалхи январĕн 9-мĕшĕнчен тытăнса, Тутарстан Республикин патшалăх чĕлхисемпе пĕлтермесĕр ачасем валли таварсем, апат-çимĕç таварĕсем, табак изделийĕсем, йăлари хими таварĕсем, парфюмери, косметика, наркăмăшлă имçамсем, ÿсентăрансем тата выльăх-чĕрлĕхе ÿстермелли стимуляторсем, минераллă удобренисем, медикаментсем тата эмел препарачĕсем сутма юраманни çинчен каланă. Ытти мĕнпур таварсене 1999 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса Тутарстан Республикин патшалăх чĕлхисемпе пĕлтермесĕр сутма юрамасть. Пĕлтернине саспаллисене пичет меслечĕпе упаковки е этикетки çине уçмасăр курăнмалла çырмалла. Упаковки е этикетки пысăк калăпăшлă пулманнипе вĕсем çине текста çырма май пулмасан, тавар е унăн пĕр пайĕ çинчен кашни таварăн техника документацийĕнче е урăх майпа пĕлтерни пулмалла.

Виççе чĕркенĕ таварсене сутнă чухне вĕсем çинчен пĕлтерни магазинăн кашни пайĕнче пулмалла тата потребитель е контроллекен орган ыйтнипе кăтартмалла.

Апат-çимĕç продукчĕсем çинчен пĕлтернинче (вĕсен уйрăмлăхĕсене шута илсе) виçи е калăпăшĕ тĕп ингредиентсем е продуктсен составĕ, упрамалли условисем, срокĕ, хатĕрлемелли меслет çинчен хушса пĕлтерни пулмалла. Таварпа усă курнă пулсан, çакăн çинчен те пĕлтермелле.

**Р.СУФИЯНОВ,**
**потребительсен прависене хÿтĕлекен район комитечĕн председателĕ.**

## Пĕлтерÿсем

**"ТАТТЕЛЕКОМ" УЭС ГУП приватизациленĕ вăхăтĕнче йĕркеленекен акционер обществин акцийĕсен хупă çырăнтарăвне хатĕрленес тĕллевпе электричество çыхăнăвĕн Нурлат районĕнчи узелĕ 1998 çулхи июль уйăхĕн 28-мĕшĕччен даннăйсене çирĕплетме паспортпа тата ĕç кĕнекипе васкавлăн пыма чĕнет:**

**- предприятире ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă пенсионерсем, çав шутра ĕçре суранланнипе е професси чирне пула инвалид пулса пенсие тухнисем;**

**- çак предприятире вăй хунă ĕçченсем: арçынсем - вунă çултан кая мар, хĕрарăмсем - çичĕ çул та ултă уйăхран кая мар (пĕрлехи стаж) тата куçмалли йĕркепе хăйсен кăмăлĕпе ĕçрен тухнисем;**

**- çак предприятире ĕçленисен, производствăра вилнисен еткерçисем, çемье членĕсем. Телефон: 2-27-17.**

**Администраци.**

**Икĕ пÿлĕмлĕ хваттер сутăнать. Телефон: 2-22-38.**

* * *

**Лайăх шайри ВАЗ-2105 (хаклă мар), бензин-76 сутатпăр. Адрес: Циолковский урамĕ, 33-2.**

* * *

**8х8 метрлă пура, афган поселокĕнче 10 соткаллă участок сутăнаççĕ, хакĕ 10 пин тенкĕ. Телефон: 5-24-62.**

**Адлер Ибрагимович Газизуллина пирĕн вулакансем лайăх пĕлеççĕ. "Росгосстрах - Тутарстан" Нурлатри филиалĕн директорĕ пулнă май вăл час-часах çынсемпе тĕл пулать, вĕсен ыйтăвĕсемпе кăсăкланать . Вĕсенчен хăшĕ-пĕрне татса пама ĕçлĕ сĕнӳсем пама пултарать. Аяларах эпир çавăн çинчен калаçатпăр.**

# Хăвăрăн малашлăхăра телейлĕ тăвăр

***- Адлер Ибрагимович, хальхи вăхăтра хăйсен ачисене аслă пĕлӳ парас, тивĕçлĕ туй ирттерес, çамрăксене хăйсем тĕллĕн пурăнма мĕн кирлине парнелес тесен мĕн тумалла-ха?***

- Çынсене эпĕ яланах мĕн каланине пĕлетĕр-и? Эпир патшалăха тата социаллă тивĕçтерӳ органĕсене шаннă вăхăт иртрĕ. Хальхи вăхăтра хăйĕншĕн тата хăйĕн ачисемшĕн кашни хăй тăрăшмалла. Ку вара малашнехи çинчен шутлама пĕлмеллине пĕлтерет.

***- Укçа пуçтармалла-и?***

- "Чăлха" ăшне укçа пуçтарни усăсăр ĕç. Пухнă укçана йӳнелмелле мар вырнаçтармалла. Эпĕ пурнăçа страхланăшăн пуçтарăнакан укçа çинчен калатăп. Пирĕн компани граждансемпе кашни уйăхра взнос тӳлесе пурнăça страхламалли договор тăвать. Паллах ĕнтĕ, договора тусан кирлĕ сумма та хăвăртрах пуçтаратăн.

***- Эсир инфляци çинчен каларăр вĕт-ха?***

-Пирĕн страховани компанийĕ инвестици тупăшĕпе граждансен взносĕсене индексацилет. 1995 çултанпа пирĕн компани индексаци процентне икĕ хут ӳстерчĕ ĕнтĕ, çапла майпа, страхланакан укçине йӳнетесрен сыхласа хăварчĕ. Тĕслĕхрен, 40 çулхи арçын страховани договорне виçĕ çуллăха тăвать пулсан, вăл виçĕ çул хушшинче 784 тенкĕ те 80 пус тӳлет, кашни уйăхра 21 тенкĕ те 80 пус. Договор срокĕ иртсен вăл 1000 тенкĕ илет. Паллах ĕнтĕ 5 тата ытларах çула договор тусан, страховани условийĕсем тата та усăллăрах.

Çӳлерех илсе кăтартнă тĕслĕхрен хăш срокра мĕн чухлĕ укçа пуçтарассине эсир шутласа кăларма пултаратăр.

***- Тĕслĕхрен, ывăла е хĕре коммерциллĕ лайăх вĕренӳ учрежденийĕнче вĕрентме...***

- Çапла, хальхи вăхăтра обществăна кирлĕ профессие вĕренес тесен укçа-тенкĕ сахалах кирлĕ мар. Анчах та çыннăн ку пĕртен-пĕр ыйтăвĕ мар вĕт-ха! Чылайăшĕ канма каймама ĕмĕтленеççĕ, каматăр пысăк пахалăхлă сиплев кирлĕ. "Тасфир" санаторипе курорт сиплевне те, чикĕ леш енчи пăллă специалистсем патĕнче консультаци иртме те, кирлĕ пулсан операци те йĕркелеме пултарать. Пурте пирĕн клиентăн кăмăлĕнчен килет. Тата çакна тимлĕх уйăрăр: предприятисен ертӳçисем хăйсен ĕçченĕсене пирĕн патра страхласа пысăк та ырă ĕç тăваççĕ. Çак суммăсенчен пенси тата бюджет тулашĕнчи фондсене взноссем илмеççĕ, çак тăкаксем, тавар сутнин (е услугăсен) калăпăшĕн пĕр проценчĕ хăйхаклăха кĕреççĕ, çапла майпа предприятисемшĕн çынсемшĕн тăрăшни усăллă.

***- Адлер Ибрагимович, страховани компанийĕ инвестици компанине çаврăннă пек туйăнать.***

- Атьăр-ха, укçа пуçтармалли страховани банк взносĕсенчен мĕнпе уйрălса тăнине тишкерер.

Тĕп уйрăмлăха договорта палăртнă. Унта пĕрремĕш пунктсенчех договорта палăртнă сумма страхлакан страховани событийĕ çитсенех илмелли правона çирĕплетнĕ. Пирĕн тĕслĕх патне таврăнарха, 40 çулхи арçын страховани договорĕ тунă, взноссем тӳлеме тытăннă (6 уйăх, 1 çул), кĕскен каласан, договор срокĕ тухман-ха, анчах та страховани инкекĕ пулнă (тĕслĕхрен, страхланă çын вилнĕ). Ун пек чухне страховани суммине пĕтĕмпех, ку хутĕнче 1000 тенкĕ, халалласа хăварнă çынна параççĕ. Банк вара çак вăхăт тĕлне пуçтарăннă укçана çеç парать. Укçа пуçтармалли страховани договорне тусан эсир хăвăра шăпари тĕрлĕ инкексенчен сыхлатăр. Çавна май эсир канма е сипленме, ачасене вĕрентме е туя укçа пуçтаратăр. Çынсемшĕн ку меллĕ-и? Паллах ĕнтĕ.

***- Адлер Ибрагимович, Эсир ĕмĕрлĕх страховани договорне те тăватăр-и? Ăнлантарса параймăр-ши?***

Çапла, ача çуралсан тата 70 çитиччен ĕмĕрлĕх страхованийĕн договорне тăватпăр, çын мĕн чухлĕ çамрăкрах, страховани взносĕ те сахалрах. Çапла, страховани сумми 1000 тенкĕ пулсан 1 çулхи ачашăн 17 тенкĕ те 70 пус тӳлемелле, 40 çулхи арçыннăн 140 тенкĕ те 30 пус, 60 çулхин - 363 тенкĕ те 70 пус, 40 çулхи хĕрарăм 68 тенкĕ те 40 пус тӳлет, 60 çулхи - 242 тенкĕ те 10 пус. Страховани инкекĕ пулсан страхланакан страховани суммине пĕтĕмпех илет. Ĕмĕрлĕх страховани договорне 500 тенкĕрен пуçласа 30 пин тенке çитиччен тума пулать.

Пирĕн фирма Раççейри патшалăхăн пĕртен-пĕр страховани компанийĕ, çавăнпа та чи шанчăкли шутланать. Эпир гражданссене вĕсен пурнăçне, пурлăхне, выльăх-чĕрлĕхне, транспортне, çурт-йĕрне тата ыттине страхлас тĕлĕшпе услăгăсем паратпăр, çакна валли пирĕн страхованийĕн тĕрлĕ йĕркисем пур. Килĕр, эсир уншăн ӳкĕнмĕр.

**Д.ТЯМАЕВА**
**калаçнă.**

## Санăн çыннусем, ял



## Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре - 40 çул

**Харрас Яруллин выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре хĕрĕх çул вăй хурать ĕнтĕ.**

**Çулсем питĕ хăвăрт та сисĕнмесĕр иртеççĕ. Çичĕ класс пĕтернĕ хыççăн вăтанчăк та именӳллĕ каччă хăй фермăна пĕрремĕш хут пынине питĕ лайăх астăвать-ха. Ун чухне ăна мĕнпур ĕçе пурнăçлама Мингарай Низамов (халь вилнĕ) вĕрентнĕ. Харрас, ачаранах хресчен ĕçне хăнăхнăскер, йывăрлăхсене ӳпкелешме вĕренмен. Кайран вăл салтака кайса килнĕ, авланнă, ачисем çуралнă. Çак вăхăт хушшинче хуçалăхра та чылай улшăнусем пулнă: малтан Тури Нурлат ялĕ Нариманов ячĕпе хисепленекен колхоз пулнă, кайран Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен колхоз пысăклатнă "Дружба" хуçалăх шутне кĕнĕ, каярах вара каллех уйрăм хуçалăх пулса уйрăлнă. 60-мĕш çулсем вĕçĕнче кивĕ фермăсен вырăнне çĕнĕ, кирпĕчрен тунисем ӳсce ларнă, ĕç условийĕсем лайăхланнă. 1975 çулта хуçалăхсем хушшинчи ĕне выльăх самăртакан пĕрлешӳ туса хурсан, опытлă ĕçченсенчен пĕрне - Яруллина выльăхсем самăртнă çĕре ĕçleме куçарнă. Кунта вăл ĕçре яланах малта пулнă Нургали Сафинпа Габсалям Ахметсафинпа пĕрле вăй хурать.**

**Харрас Яруллин 60 çул тултарать пулин те, вăл халĕ те хăйĕн ĕç вырăнĕнче.**

**Май уйăхĕ пуçламăшĕнче ĕне выльăхсене пурне те çуллахи лагере куçарнă. Лагерь Хăнтăрчаран инçех мар, питĕ илемлĕ вырăнта вырнаçнă тата вăл ялтан инçе мар пулни меллĕ. Харрас 500 пуç выльăх пăхать, паллах ĕнтĕ, кĕтӳçсемсĕр пуçне, вĕсем кунта ултă . Выльăхсене ушкăнсене уйăрса кĕтеççĕ. Вĕсене 3-шер килограмм çăнăх тата тутлă шăршлă утă параççĕ. Зайдулла Мухамметов симĕс масса яланах палăртнă вăхăтра илсе килет те пурне пĕр пек валеççе парать. Рационпа тата паха апат çитерсен выльăхсем те лайăх ӳт хушаççĕ. Çакăн пек режимпа вĕсем сентябрь уйăхĕччен ĕçлеççĕ. Кайран вара хĕллехи витесене куçаççĕ. Выльăх-чĕрлĕх пăхакан Х.Яруллинпа унăн юлташĕсемшĕн вара яваплă тапхăр - выльăхсене ăнăçлă хĕл каçарасси пуçланать. Харрас пичче вара ку ĕçсене пурне те хăнăхнă.**

**Ӳкерчĕк çинче: хресченсен хуçалăхĕсен "Кондурча" ассоциацийĕнче выльăх пăхакан Х.Яруллин.**

— Ачасен çуллахи канăвĕ —

# Рейд малалла пырать

***Шкулсем çумĕнчи лагерьсен ĕçне тĕрĕслес тĕлĕшпе ĕçлекен ятарлă комисси хăйĕн рейдне малалла ирттерет. Юлашки кунсенче вăл Селенкĕшри, Кăчăканлăри, Тури Нурлатри, Анат Нурлатри тата Салтакъелĕнчи шкулсем çумĕнчи ĕçпе кану лагерĕсем мĕнле ĕçленипе паллашрĕ. Комисси вĕсен ĕçĕпе кăмăллă пулнине палăртрĕ. Уйрăмах Кăчăканлăри тата Тури Нурлатри шкулсем çумĕнчи лагерьсен ĕçне лайăх йĕркеленине палăртса хăварчĕ.***

Кăчăканлăри лагерь ĕçĕ вара ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăрать. Кунта ытти условисемсĕр пуçне, музыка ертӳçи тата хореограф та ĕçлеççĕ. Ачасен баян тата гитара пур. Лагерьте радиохаçат йĕркелеме пултарнă, ун урлă вĕсем кашни эрнери ĕç итогĕсене пĕтĕмлетеççĕ.

Ачасем шыва кĕреççĕ, тĕрлĕ мероприятисене хутшăнаççĕ, пахчара ĕçлеççĕ. Кĕскен каласан, хăйсен вăхăтне усăллă та кăсăк ирттереççĕ.

Комисси Тури Нурлатри шкул лагерĕнче пулнă вăхăтра ачасем шкул çумĕнчи опытлă участокра хурлăхан тата хăмла çырли пуçтаратчĕç. Спорт залĕнче тĕрлĕ вăйăсем ирттереççĕ, шахмат класĕ уçнă. Çулпа çӳремелли правилăсене вĕрентме уйрăм кунсем палăртнă. Ачасен шыва кĕме, канма та вăхăт пур. Шкул садĕнчи йĕркелĕх те тĕлĕнтерет. "Столовăйри тасалăхпа тирпейлĕх умывальник çумĕнче çакăнса тăракан шап шурă алшăллинчен тытăнать," - теççĕ комисси представителĕсем.

**Лагерьсенче апат-лантарассине йĕркелени çинчен калас пулсан, кунта хуçалăх ертӳçисемпе пĕр чĕлхе тупнă, çакă лайăх результатсем тума пулăшать. Рейд малалла пырать.**

# Лару-тăрăва шута илсе

Нумаях пулмасть вăрçăпа ĕç ветеранĕсен район Совечĕн президиумĕн канашлăвĕ пулса иртрĕ, унта Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннисене тата инвалидсене эмелсем йӳнĕ хакпа, рецептсемпе тӳлевсĕр парас ыйтăва пăхса тухрăмăр.

Юлашки уйăхсенче больница касси тата район бюджечĕ финансламаннипе ку ĕçре лару-тăру йывăрланнă. Районти больница касси районти тĕп аптека 460 пин тенкĕ парăма кĕнĕ. Çавна пула аптека вăрçă ветеранĕсене эмелсем тӳлевсĕр рецептсемпе пама чарнă.

Ку ыйтăва район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Ф.Н.Губайдуллин ертсе пынипе иртнĕ канашлура сӳтсе явнăччĕ, унта медицина службисен, налук инспекцийĕн ертӳçисене чĕннĕччĕ, канашлура Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннисене тӳлевсĕр эмелсемпе тивĕçтерес тĕлĕшпе конкретлă решени йышăннăччĕ.

Ветерансен организацийĕпе район администрацине çакă питĕ пăшăрхантарчĕ, мĕншĕн тесен вăрçă ветеранĕсене рецептсемпе тӳлевсĕр эмелсем паманни пĕрремĕш хут пулнă, республикăн ытти районĕсенче тата Раççейăн облаçĕсенче кун пекки йăлана кĕнĕ ĕнтĕ.

Районти аптека чирлисен 35 категорине тӳлевсĕр рецептсемпе 100 пин ытла тенкĕлĕх эмелсем парать. Çак йывăр самантра та вăл онкологи чирĕпе чирлисене тата диабетпа тертленекенсене эмелсем пама чарăнман. Ку питĕ тĕрĕс решени. Медицина учрежденийĕсен, район бюджечĕн финанс лару-тăрăвне шута илсе районти ветерансен те ку ыйтăва ăнланмалла, чи кирлĕ эмелсем кăна çыртарма тăрăшмалла.

**И.ГИЛЯЗЕВ,**
**вăрçăпа ĕç ветеранĕсен районти Совечĕн председателĕ.**

## Пени калăпăшĕ чакнă

Раççей Федерацийĕн патшалăх налукслужбин решенине тĕпе хурса, пенисем тӳлес тĕлĕшпе юридически çынсен парăмне çĕнĕрен расчет тумалли йĕркене çĕнĕ системăпа ирттереççĕ.

Çак вăхăтчен пени парăмăн 0,3 проценчĕ шутланнă. Халь вăл банкпа палăртнă ставкăран килет тата ăна рефинансировани ставки теççĕ. Халь районти налук инспекцийĕн сотрудникĕсем апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа парăмсене çĕнĕлле расчет тăвассипе пысăк ĕç пурнăçлаççĕ.

Малтан шутланă тăрăх, апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне район бюджетне пенисем тӳлес тĕлĕшпе парăм (бюджета кĕмен фондсенче пение кивĕ системăпа шутлаççĕ) 670 пин тенкĕ шутланнă пулсан, çĕнĕрен расчет тунă хыççăн сумма чылай чакнă - 340 пин тенкĕ. Ку юридически çынсемшĕн ырă çĕнĕлĕх пек туйăнать, анчах пĕрре пăхма кăна, банк хăйĕн ставкисене тăтăшах улăштарать, çавăнпа та ставка пысăкрах пулсан, пени те пысăк.

**Хумаелпе Ҫирĕклĕре - КВН**

# Юлашки пулмасса шанатпăр

Июлĕн 4-мĕшĕнче Хумаелĕнчи культура ҫуртĕнче уяври пекехчĕ. Ҫав кун кунта Хумаел, Ҫирĕклĕ тата Бикулово командисем пулмаллаччĕ, шел, виҫҫĕмĕшĕсем вăййа хутшăнаймарĕҫ.

КВН уйрăм пилĕк конкурсран тăчĕ. Малтан командăсем пĕрпĕринпе паллашрĕҫ. Икĕ команда та хăйсем тавҫăруллă пулнине кăтартрĕҫ, ҫакна уйрăмах ял ыйтăвĕсене ҫутатакан шӳтлĕ номерсем, такмаксем ҫирĕплетрĕҫ, вĕсен аллинче ахаль аш арманĕ те камерăна ҫаврăнчĕ. Тепĕр конкурсра яшсемпе хĕрсем пĕр-пĕрне анекдотсем каласа памаллаччĕ, ҫапла майпа вăййа хутшăнакансен асра тытаслăхне тĕрĕслерĕҫ. Ҫакă, малтан ача вăййи пек ҫеҫ туйăннăскер, ҫăмăлах пулмарĕ.

Капитансен конкурсĕ те тавҫăруллă та ăслă пулма хистерĕ, вĕсен ялта чи анлă сарăлнă профессисем ҫинчен каласа памаллаччĕ: агроном, ферма заведующийĕ, ветеринари врачĕ.

Конкурсра чи кăсăкки киле панă ĕҫ пулчĕ пулĕ. Кунта командăсем хăйсен мĕнпур пултарулăхне кăтартрĕҫ, хăвна сцена ҫинче тытма пĕлмеллеччĕ, сăнара кĕмеллеччĕ тата ытти те. Ҫирĕклĕсем, тĕпрен илсен, коллективлă хуҫалăх пурнăҫне кăтартрĕҫ, хумаелсен сценарине Некрасовăн "Кама Русре пурăнма лайăх?" - поэмипе йĕркеленĕччĕ.

Юлашки конкурсра вăйă - пантомимаччĕ. Хут ҫине ҫырнине КВН - щиксен сăмахсăр, питкуҫпа, алăпа кăна кăтартмаллаччĕ. Ҫакăнпа вăйă вĕҫленчĕ те жюрине сăмах пачĕҫ. Пăлханса, пăшăрханса кĕтнĕ минутсем ҫитрĕҫ. Акă тинех ҫĕнтерӳҫĕ кам пулни ҫинчен каларĕҫ: "Игенче" команда, хумаелсем ҫĕнтерчĕҫ. Ҫирĕклĕ команди те вăйлăччĕ, вĕсем питĕ лайăх хатĕрленнĕччĕ.

КВН вĕҫленчĕ. Анчах та эпир ҫак кăсăк самантсене тахҫанччен асра тытăпăр. Ялсенче халь уявсем сахалланчĕҫ, ҫавăнпа та эпир ҫакăн пек вăйăсене чăтăмсăррăн кĕтетпĕр, уйрăмах ҫамрăксем, унта вĕсем хăйсене кăтартма тата ыттисене курма пултараҫҫĕ. Ҫав вăхăтрах ҫакăн пек мероприятисем ял ҫыннисен кăмăлĕсене, ĕҫлес туйăмĕсене ҫĕклеҫҫĕ.

**Р.САЛАХОВА.**
**Хумаел ялĕ.**

## Чун-чĕререн тав тăватпăр

Эпир йывăр чирлесен тӳрех тухтăр патне васкатпăр. Акă пирĕн анне 77 ҫулхи Хадича Мингалимовна Аюпова сасартăк чирлесе ӳксен те эпир районти тĕп больницăн куҫ уйрăмĕн заведующийĕнчен М.Г.Галеевран пулăшу ыйтрăмăр. Вăл пирĕн аннене операци турĕ, халь пирĕн анне ăна тав туса пĕтерейместь. Анне ҫаплах уйрăмри медсестрасемпе санитаркăсене чун-чĕререн тав тăвать, Питтĕмĕрьелĕнчи Миннегаян Валиевана ырă кăна сунать. Эпир те вĕсене пурне те пурнăҫра ăнăҫу сунатпăр.

**Р.АЮПОВА.**
**Аксу районĕ.**

** Уяв юррисем*

## Пире урҫа ан кĕттĕр

- Кăлтăр-кăлтăр урапа,
Ăста каян урапа?
- Ут валли утă ҫулма.
Ҫӳрен кĕсрен тихине
Ыраш улăмĕ те юрĕ-ха.

Хура ĕнен пăрушне
Хыт-хура та юрĕ-ха
Ларма килен хĕрсене
Урҫа каччă та юрĕ-ха.

- Урҫана качча кайиччен
Арман чулĕ ҫĕклĕттĕм.
Арман чулĕ ҫĕкличчен
Тулă пăтавкки ҫĕклĕттĕм.

Тулă пăтавкки ҫĕкличчен
Сар ҫу чĕресси ҫĕклĕттĕм.
Ирĕлтĕр, ирĕлтĕр, ан пĕттĕр,
Пире урҫа ан кĕттĕр.

Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.


**АКБ "СБС-АГРО" Татарский региональный филиал**
**дополнительный офис 7448**
**принимает вклады от населения**

Рублевые вклады частных лиц (% годовых)

| | | | |
|---|---|---|---|
| Вклад до востребования | | | 4,0% |
| Пенсионный вклад до востребования | | | 16,0% |
| С фиксированной процентной ставкой | 15 дней | Срочный непопол. | 30,0% |
| | 1 мес+1 день | Срочный непопол. | 31,0% |
| | 2 мес+1 день | Срочный непопол. | 32,0% |
| | 3 мес+1 день | Срочный непопол. | 33,0% |
| | | Капитал не менее 25000р | 34,0% |
| | | V.I.P/ не менее 100000р | 37,0% |
| Ставка досрочного отзыва | | | 2,0% |
| ВКЛАДЫ ЧАСТНЫХ ЛИЦ В ДОЛЛАРАХ США (% ГОДОВЫХ) | | | |
| Вклад до востребования | | | 3,5% |
| С фиксированной процентной ставкой | 1 мес+1 день | Срочный непопол. | 12,0% |
| | 2 мес+1 день | Срочный непопол. | 12,5% |
| | 3 мес+1 день | Срочный непопол. | 13,0% |
| | | Капитал не менее 5000$ | 13,5% |
| Ставка досрочного отзыва | | | 1,8% |

**ИЗГОТАВЛИВАЕМ И ПРИНИМАЕМ К ОБСЛУЖИВАНИЮ ПЛАСТИКОВЫЕ КАРТОЧКИ.**
**ГЕНЕРАЛЬНАЯ ЛИЦЕНЗИЯ ЦБ РФ N61 ОТ 27.01.97 Г.**
**ЖДЕМ ВАС ПО АДРЕСУ:** ул.Советская,113, тел. для справок: 2-22-71, 2-22-20, 2-22-46.



*Капăрлатмалли материалсем тата сантехника сутакан "Интерьер Плюс" магазин хыпарĕсем*

*Эсир юсав ĕҫĕ пуҫласшăн-и? Сире сантехника, шпалер, линолеум кирлĕ-и? Самар е Хусан хулине кайма инҫе тата хакла ларать вĕт-ха. Ятарласа Сире валли тата пирĕн патра ҫеҫ Эсир хăвăра кирлине тупатăр. Вăтам хакпа пирĕн патра суту-илӳре 120 тĕрлĕ шпалер, 10 тĕрлĕ линолеум тата ыттисем! Ку Сирĕншĕн питĕ меллĕ.*

*Пысăк тиеве киле тӳлевсĕрех леҫсе паратпăр.*

*Эсир пирĕн патра хăвăр кăмăллакан тавара тупаймарăр пулсан ан кулянăр, пирĕн таварсен ятарлă илемлетнĕ тĕрлĕ тĕслĕ катологĕ пур. Суйласа илĕр те заказ парăр. Сирĕн заказăра эрне хушшинче пурнăҫлатпăр.*

*Пирĕн тавара туянакансем кăмăллă пулсан эпир те кăмăллă!*

*"Интерьер Плюс" магазин. Адрес: Школьная урамĕ, 8, иккĕмĕш хут. Лицензи Б-97 288649 номерлĕ.*


## Пĕлтерӳсем

*"Нурлатгаз" ЭПУ комбинациллĕ, вĕри шыв парса тăракан газ кăмаки сутать, хакĕ 2100 тенкĕ. Адрес: Гиматдинов урамĕ, 158.*

**1998 ҫулхи июлĕн 25-мĕшĕнче Нурлат хулинчи 2-мĕш номерлĕ шкултан 1993 ҫулта 11"Б" класран вĕренсе тухнисен тĕлпулăвĕ пулать. Ыйтса пĕлмелли телефонсем: 5-22-06 (Лейсан), 2-11-48 (Наташа).**

Ҫемье хваттер тара илет. Телефон: 5-23-85.

* * *

Кӳмеллĕ тата мотоблокăн прицепĕпе "ИЖ-Планета" мотоцикл сутăнать. Телефон: 5-36-50.

* * *

Хула варринчи икĕ пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать.
Телефон: 2-17-57.

* * *

Кивĕ Чаллăри газпа хутса ăшăтмалли ҫурт сутăнать. Нина Артамоноваран ыйтса пĕлмелле.

*1979 ҫулта туса кăларнă ГАЗ-53 сутăнать, хакĕ пирки калаҫса татăлма пулать. Телефон: 5-22-60.*

## Пĕлтерӳсем

*Хула варринчи ҫурта икĕ пĕр пӳлĕмлĕ хваттерсемпе е пĕр пӳлĕмлĕ хваттерпе (хушса тӳлесе) улăштаратпăр. Адрес: Мичурин урамĕ, 2.*

* * *

*Усă курнă стенка сутатпăр. Телефонсем: 5-12-69, 5-33-97.*

* * *

*Апат-ҫимĕҫ комбиначĕ хыҫĕнче ҫĕр улми акнă 6 сотка участок сутăнать.*

* * *

*Хăнтăрча юханшывĕ хĕрринче укҫа енчĕкĕ, Владимир Александрович Афанасьев ячĕпе панă паспорт, водитель удостоверенийĕ, тех. паспорт тата ытти документсене тупакана Кушкă яле, 60 лет Октября урамĕнчи 42-мĕш номерлĕ ҫурта пырса пама ыйтатăп. Телефонсем (код) 8-846-50, 2-12-56, 2-28-34. (Парне 1 пин тенкĕ).*

* * *

*Сахăр заводĕнчи икĕ пӳлĕмлĕ хваттере пĕр пӳлĕмлипе (хушса тӳлесе) улăштаратпăр е сутатпăр. Адрес: Заводская урамĕ, 15-9, посредник урлă.*

* * *

*1998 ҫулта туса кăларнă, 4000 километр ҫӳренĕ, "чие" тĕслĕ ВАЗ-21093 сутăнать. 5-21-70 номерпе 17 сехет хыҫҫăн шăнкăравласа пĕлмелле.*

* * *

*Пĕр пӳлĕмлĕ хваттере тара паратпăр. Телефон: 5-25-85.*

* * *

*Хула варринчи пĕр пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Адрес: Школьная урамĕ, 11-26.*

* * *

*1997 ҫулта туса кăларнă, 13 пин километр ҫӳренĕ ВАЗ-21091 а/м двигателĕ сутăнать, хаклă мар. Телефон: 3-83-81.*

* * *

*Афган поселокĕнче кирпĕчрен тунă 10х12 метрлă ҫĕнĕ ҫурт сутăнать. Веранда пур (шалти ĕҫсене туса пĕтермен), участока карта тытнă, хаклă мар. Телефон: 2-18-21.*

* * *

*Куйбышев урамĕнчи 43-мĕш ҫуртри, 29,4 тăваткал метрлă приватизациленĕ 3-мĕш номерлĕ хваттер сутăнать.*

* * *

*Хула варринчи 3 пӳлĕмлĕ приватизациленĕ хваттере 2 тата 1 пӳлĕмлĕ хваттерсемпе васкавлă улăштаратпăр. Адрес: Школьная урамĕ, 13-17, 17 сехет хыҫҫăн ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Хулăнăшĕ 1,3,5мм. тимĕр, гараж хапхисем, металтан тунă 7х4 калăпăшлă гараж сутатăп. Адрес: Димитров урамĕ, 7. Телефон: 5-41-64.*

* * *

*"Тойота-Карина" автомашина сутатпăр. Тĕрлĕ вариантсем пулма пултараҫҫĕ. Адрес: Нефтяниксен урамĕ, 9-16.*

* * *

*Автовокзала хирĕҫ ҫуртра пĕр пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Адрес: Пушкин урамĕ, 45-8.*

* * *

*Больница патĕнчи гараж сутăнать. Телефон: 5-21-94.*

* * *

*76 мм. диаметрлă цинкланă пăрăхсем, ҫаплах 50х50 калăпăшлă кĕтессем сутатăп. Телефон: 5-37-91.*

* * *

*Пĕчĕк Хăмăшлăра ҫурт сутăнать. Гиматдинов урамĕнчи 74-мĕш ҫуртри 2-мĕш хваттерте ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Кăрмăш микрорайонĕнчи 3 пӳлĕмлĕ хваттере пĕр пӳлĕмлĕ хваттерпе (хушса тӳлесе) улăштаратпăр (иккĕмĕш, виҫҫĕмĕш хутсенче пулсан лайăх пулмалла), сахăр завочĕпе чугун ҫул поселокĕсенчи хваттерсене сĕнмелле мар. 5-16-42 номерпе 18 сехет хыҫҫăн шăнкăравласа пĕлмелле.*

* * *

*9х9 метрлă пура, хыр пĕренесем 40 штук (пĕрлехи хакĕ - 12 пин тенкĕ), 50 см. никĕс блокĕсем 60 штук (1 штукĕ 200 тенкĕ) сутатпăр. Шашин урамĕнчи 27-мĕш номерлĕ ҫуртри 13-мĕш хваттерте Гарифуллинран ыйтса пĕлмелле.*


Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.
Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕҫ коллективĕ

Хаҫат эрнере виҫĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăҫĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕҫлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕҫлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуҫалăх пайĕ, промышленность, ҫырусемпе массăлла ĕҫ пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаҫата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 892. 2990